

# Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем – çемйипе

2024 Çемье çулталăкĕ

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Ирина Яковлева

## Турă пиллĕхĕпе пурăнакансем телейлĕ

**Петрпа Феврония çветтуйсен Шупашкарти палăкĕ патĕнче Çемье, юратупа шанчăклăх кунĕнче ятлă-сумлă мăшăрсене çулленех чыслаççĕ.**

Çемьепе мăшăрланăвăн хӳтĕлевçисене халалласа çамрăксен ĕçĕсемпе тимлекен епархи пайĕн ертӳçи, Шупашкарти Сергей Радонежский чиркĕвĕн настоятелĕ Антоний Ванюшкин иерей молебен ирттернĕ. Хисепе Мачамăшри Татьянăпа Святослав Ивановсем те тивĕçнĕ.

Çемье хаклăхĕсене тĕпе хурса 30 çул пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннăшăн, ачасене тивĕçлĕ воспитани панăшăн Святослав Геннадьевичпа Татьяна Ивановнăна Чăваш митрополийĕн пуçлăхĕн, Шупашкарпа Чăваш ен митрополичĕн Савватийĕн Тавĕпе тата астăвăм медалĕпе наградăланă, архиерей пиллĕхне çитерсе праçник ячĕпе саламланă.

Татьяна Ивановна Калининăри чиркĕвĕн лавккинче тата вырсарни шкулĕнче вĕрентекенре вунтăваттăмĕш çул ĕçлет, çамрăк ăрăва алĕçне хăнăхтарать. Ырă кăмăллă, сăпайлă, пуринпе те тарават вăл. Мăшăрĕ те пултаруллă, строительство ĕçне аван ăнкарать. Ĕçчен Ивановсем картиш тулли чăх-чĕп, выльăх-чĕрлĕх тытаççĕ.

Святослав Геннадьевичпа Татьяна Ивановна ывăлпа хĕре кун



Чыславра.

çути парнеленĕ, пурнăçăн анлă çулĕ çине тăма пулăшнă. Иккĕшĕ те çемьеллĕ. Халĕ Ивановсен мăнуксем çитĕнеççĕ. Петрпа Февронийăна халалланă палăк патĕнче уявлама Пĕтĕм Раççейри çемье парадне хутшăнакансем те çитнĕ.

Обществăлла организацисенче тăрăшакансем, Чăваш ен православи общинисем, храмсен прихучĕсене çӳрекенсем Амăшĕн Монументĕнчен пуçласа Святотроицки мăнастир умĕнчи площаде çитиччен утса тухнă. Пирĕн Шупашкар хули пĕтĕм Раççейри çемье парадне хутшăннă çĕр хуласен шутне кĕнĕ. Каласа хăвармалла, çемье парачĕ Мускавпа Пĕтĕм Раççейри Кирилл Патриархăн пиллĕхĕпе иртнĕ.

**Елена ГРИГОРЬЕВА**

## Пулас ашшĕсен шкулĕ пур

**Çемьене çĕнĕ кайăк вĕççе килессе пурте чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Этемлĕхĕн вăйлă çурри те хăвăртрах ывăлне е хĕрне алла тытма ĕмĕтленет.**

Акă, Шупашкарта çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче пулас ашшĕсемпе черетлĕ тĕлпулу йĕркелеме палăртаççĕ. Вĕсемпе 1-мĕш хула больницин акушер уйрăмĕн заведующийĕ Александр Чачик лекци ирттерĕ. Вăл арçынсене хĕрарăмсен организмĕнчи улшăнусем (ача кĕтнĕ вăхăтра тата çăмăллансан) пирки, тин çуралнă пепкесене пăхас тĕлĕшпе практикăллă канашсем парĕ.

Ашшĕн пепке çут тĕнчене килчченех ăна епле пăхассипе çыхăннă тĕп самантсем пирки ăнкармалла. Ача пурнăçĕнче вăл та амăшĕ пекех пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Пулас ашшĕсен шкулĕсенче илнĕ пĕлӳсемпе практика хăнăхăвĕсем арçынсене хăйсен мăшăрĕсене лайăхрах ăнланма, вĕсен сывлăхне упрама, ача пăхнă çĕре туллин хутшăнма пулăшаççĕ, – тет тухтăр.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

## Çур ĕмĕр – килĕшӳпе ăнланура

**Юрату, ăнланупа килĕшӳ, иккĕн пĕр чун пулса пурăнни... – ĕмĕртен пыракан çак хаклăхсем тăраççĕ çемье никĕсĕнче. Анчах мĕнле упраса пымалла-ха вуншар çул хушшинче ку черчен туйăмсене? Тĕрĕссипе, пĕр-пĕрне вĕçĕм хисеплекен, яланах пĕр еннелле пăхакан, Турă панă кашни куна пĕр-пĕриншĕн пурăнакан мăшăрсемшĕн çакă йывăр мар пулĕ. Кун-çул сукмакĕ çине тухса пыракан чăрмавĕсем те вăйлăрах тăваççĕ вĕсене, савăнăçĕ-ырлăхĕ вара çемье телейне ытларах та ытларах çирĕплетет.**



Ивановсен.

Çур ĕмĕр çума-çумăн, алла-аллăн тытăнса, хуйхă-суйхăра та, савăнăçлă самантсенче те яланах пĕрле – çакăн пек калама пулать Çĕньял Хапăсри Ивановсем пирки те. Фаина Семеновнăпа Григорий Иванович иртнĕ уйăхра паллă пулăма – хăйсен ылтăн туйне – паллă тунă. Сумлă юбилей кăçалхи Çемье çулталăкне тивни те – хăйнеевĕрлĕ çутă символ. Мĕншĕн тесен Ивановсем пек çирĕп çемьесем – çамрăксемшĕн тĕслĕх, вĕсем тĕрĕс çемье хаклăхĕсене вĕрентеççĕ, çĕршыв тĕрекĕ пулса тăраççĕ.

Фаина Семеновнăпа Григорий Иванович хăйсен йăхне тăсаканĕсемшĕн те – тĕслĕх. Виçĕ ачана çут тĕнче парнелесе, воспитани парса пурнăç çулĕ çине тăратнă вĕсем. Мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса, сынлăха мала кăларма тата ырăлăха вĕрентсе çитĕнтернĕ. Халĕ хисеплĕ мăшăрăн тăватă мăнук. Вĕсене те чун-чĕререн юратаççĕ, çамрăк ăрăвăн ӳсĕмĕ-çитĕнĕвĕсемпе савăнаççĕ Ивановсем.

Фаина Семеновнăпа Григорий Иванович хăйсен ĕç-хĕлĕнче те тăрăшулăхшăн, яваплăхшăн пысăк ят-сума тивĕçнĕ. Çемье пуçĕ, Григорий Иванович, акă – Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Çак хисеплĕ ят – унăн район, республика агропромышленность комплексĕн аталанăвне хывнă сумлă тӳпин хаклавĕ. Нумай çул вăл колхозра водителе ырми-канми тăрăшнă. Фаина Семеновна вара райпо тытăмĕн хастарĕ. Чылай тапхăр маттур хĕрарăм сутуçăра тимленĕ.

Ивановсен çемйи чăннипех те юратупа шанчăклăх, çирĕплĕхпе тивĕçлĕх тĕслĕхĕ. Çемьери ăшăлăхпа ăнланăва, килĕшĕве упраса татах та нумай-нумай çул пурăнмалла пултăрччĕ. Ылтăн туйпа саламланă кун юбилярсене округ пуçлăхĕн заместителĕ Алексей Фирсов, ЗАГС пайĕн специалисчĕ Алена Савельева тата Санарпуç территори пайĕн ертӳçи Наталия Давыдова та вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăхпа ăнăçу суннă.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

## Ырă тĕслĕх кăтартакан çемьесем

**Нумай çул пĕр-пĕринпе килĕштерсе, çураçса пурăнакан мăшăрсене кашниех хисеплет. Пирĕн Малтикас Ялтăра ялĕнче çирĕп çемьесем сахалах мар.**

Илер-ха **Раисăпа Самуил АРСЕНТЬЕВСЕНЕ**. Вĕсем пурнăç сукмакĕпе утма пуçлани 67 çул çитет. Виçĕ ачана кун çути парнеленĕ Арсентьевсем: икĕ хĕрпе пĕр ывăл. Паянхи куна вĕсен тăватă мăнук, тăхăр кĕçĕн мăнук. Самуил ĕмĕрĕпе тăван колхозра шоферта вăй хунă. Раиса та хуçалăхрах тăрăшнă.

Самуилăн сывлăх хавшакрах пулнăран ăна ывăлĕ Станислав, мăшăрĕ, мăнукĕ, хĕрĕ Лия лайăх пăхаççĕ.

Тепĕр хисеплĕ çемье – **Еленăпа Леонид ГРИГОРЬЕВСЕМ**. Вĕсем те пурнăç çулĕпе çураçуллă утаççĕ, икĕ хĕрача, пĕр ывăл ача çуратса ӳстерсе тарăн пĕлӳ илме пулăшнă. Ывăлĕ Николай Хусанта ятлă-сумлă ĕçре тимлет. Леонид Григорьев ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн нумай çул «Новый путь» колхоз ертӳçинче, ял администрацийĕнче ĕçлерĕ. Мăшăрĕ Елена Калининăри перекет кассинче тăрăшса пенсие тухрĕ. Вĕсен паянхи куна тăватă мăнук, пĕри Анжела Леонидовнăн хĕрĕн ывăлĕ. Вăл Пĕтĕм тĕнчери банк институтне пĕтернĕ, çемьеллĕ, Мускавра тĕпленнĕ.

**Тамарăпа Анатолий ЕГОРОВСЕМ** 53 çул çемье сукмакне такăрлатаççĕ. Паллах, пĕрпĕрне хисеплесен, ăнлансан, kaçарма пĕлсен пурнăçĕ те кал-кал пырать. Вĕсем 5 ачана пурнăç парнеленĕ. Икĕ хĕрпе виçĕ ывăла тĕрĕс воспитани парса ура çине çирĕппĕн тăратнă. Пурте çемьеллĕ, тăватă ачи хулара тымар янă. Асли Евгений ялта хăй çемйипе шăкăл-шăкăл пурăнать. Анатолий Егоров ял хуçалăх институтне пĕтерсе агроном дипломне илнĕ, колхозра тăрăшнă, «Госстрах» компанинче ĕçлесе пенсие кайрĕ. Мăшăрĕ Тамара нумай çул Малтикас Ялтăра клубĕнче библиотекарьте тăрăшрĕ.

**Нинăпа Николай ФИЛИППОВСЕМ** 54 çул пĕрле пурнăç çулĕпе килĕштерсе утаççĕ. Вĕсем те 5 ачана кун çути панă, виçĕ ывăлĕпе икĕ хĕрĕ çемьеллĕ. Николай 40 çул водительте ĕçлесе автобуспа районсем хушшинче çынсене турттарнă. Мăшăрĕ Нина колхозра дояркăра вăй хурса тивĕçлĕ канăва тухрĕ.

Нумай ачаллă мăшăрсен ачисене те пăхмалла, ĕçе те каймалла, çапах та пурнăç йывăр тесе нихăçан та нăйкăшман. Пурнăçра ăнланса, килĕштерсе, юратса пурăнма пĕлни çамрăк çемьесемшĕн тĕслĕх пултăр. Хисеплĕ, чăтăмлă, маттур мăшăрсем, сире пурнăçăн малаллахи çулĕпе çирĕппĕн утма Турă вăй-хăват, çирĕп сывлăх парса тăтăр.

**Нина ПАРАМОНОВА**
Малтикас Ялтăра